24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ЯНВАРЬ
9
ЭРНЕКУН
7 (6032) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Германи влаçĕсем хăйсем тытса илнĕ совет территорийĕсем çинче пур çĕрте те халăха çаратса юхăнтарни çинчен тата тискер кайăкла çавтери хăрушă ĕçсем туни çинчен

ЮТÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРĔ В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ ЯНĂ НОТА

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ ССР Союзĕ дипломатиллĕ çыхăнусем тытса тăракан çĕршывсен мĕнпур посолĕсемпе посланникĕсем патне çакăн пек нота янă:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн правительстви хушнипе Сире çакăн çинчен пĕлтеретĕп:

Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем малалла таăнăçлăн контрнаступлени туса пырса, вăхăтлăха нимĕç захватчикĕсен аллинче пулнă чылай хуласемпе ялсене ирĕке кăларнă май, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем наступлени туса пынă чухне, оккупаци вăхăтĕнче тата каялла чакнă чухне мирлĕ халăха этем халиччен курман пек пур çĕрте те пĕтĕмĕшпех çаратса юхăнтарни, совет çынисене ирсĕррĕн пусмăрлани, мăшкăллани тата массăллăн вĕлерсе пыни тăрă шыв çине тухрĕ тата кунран-кун ытларах та ытларах тăрă шыв çине тухса пырать. Совет правительстви аллинче тăракан йышлă документсем çакăн çинчен калаççĕ: халăха çаратса юхăнтарасси вăл тискер кайăкла ирĕксĕрленипе тата массăллăн вĕлерсе пынипе пĕрлех пулса пырать, çакă вăл нимĕç захватчикĕсен ури айне пулнă пур районсенче те сарăлнă. Сирсе яма çук фактсем çакна кăтартса параççĕ: тытса илнĕ ялсемпе хуласенчи мирлĕ халăха çаратас тата тискеррĕн асаплантарас режим вăл дисциплинăсăр уйрăм çар чаçĕсен, Германин уйрăм офицерĕсемпе салтакĕсен ăнсăртран сиксе тухнă ĕçĕсем мар, çав режим вăл Германи правительствипе командованийĕ малтанах палăртса хунă тата хăйсем хавхалантарса пыракан пĕр паллă система пулса тăрать; çав правительствăпа командовани хăйсен çарĕнче, офицерсемпе салтаксем хушшинче юри чи ирсĕр, тискер кайăкла инстинктсене ирĕк парса аталантарса яраççĕ.

Фашистла çар тата унăн союзникĕсем хăйсем тытса илнĕ Украинăпа Молдавин, Белоруссипе Литван, Латвипе Эстонин совет территорийĕсем çинче, Карело-Финн территорийĕ çинче тата вырăс районĕсемпе облаçĕсенче кашни утăм тумассерен пирĕн халăхăн вĕçĕмсĕр нумай материальнăй тата культурăллă хаклă пурлăхĕсене ишĕлтереççĕ, пĕтерсе тăкаççĕ, мирлĕ халăхăн тимлĕн ĕçлесе пухса пынă пурлăхне туртса илеççĕ, каторгăри ĕçпе выçлăх тата вĕлерў режимĕ туса хураççĕ; çакă хăрушла ĕçсемпе танлаштарсан, этем историйĕнче халиччен пулнă чи тискер преступленисем те шупкан курăнаççĕ.

Совет правительстви тата унăн оргăнĕсем гитлерла çарăн çав мĕнпур тискер преступленийĕсене тĕплĕн шута илсе пыраççĕ, пĕтĕм чун-чĕререн тарăхнă совет халăхĕ çав преступленисемшĕн тивĕçлипе тавăрма ыйтать тата тавăрать те.

Гитлерла çар Совет Союзĕнчен тытса илнĕ территори çинчи мирлĕ халăх тĕлĕшпе çавтери хăрушă преступленисем тунине кăтартакан фактсем çинчен Совет правительстви пĕтĕм цивилизациллĕ этемлĕхе, пĕтĕм тĕнчери мĕнпур тÿрĕ кăмăллă çынсене хăйĕн сăмахне каласа пама тивĕçлĕ тесе шутлать.

I

Нимĕç захватчикĕсем совет территорийĕ çине ăçта пырса кĕнĕ, çавăнта вĕсем пирĕн хуласемпе ялсене ишĕлтерсе юхăнтарнă. ССР Союзĕн вăхăтлăха оккупациленĕ районĕсенчи вуншар хуласене, пиншер ялсене вĕсем çĕмĕрсе пĕтернĕ е тата тĕппипех çунтарса янă. Германи войскисем хулари çуртсене, предприятисене, сооруженисене, кварталĕ-кварталĕпе вăрă-хурахла çĕмĕрсе, пĕтерсе тăкнин нумай тĕрлĕ фактсене палăртса хунă; çавăн пек тискер ĕçсем Минскра, Киевра, Новгородра, Харьковра, Ростовра, Калининра тата ытти хуласенче те пулнă. Мускав облаçĕнчи Истра, Клин, Рогачево хулисем пек, Тула облаçĕнчи Епифань хули пек, Смоленск облаçĕнчи Ельня хули пек тата ытти çĕрти хуласем пек хуласене ишĕлтерсе чул куписем туса хунă. Нимĕç захватчикĕсем Украинăра тата Белоруссире, Мускав, Ленинград, Тула облаçĕсенче тата пирĕн çĕршывăн ытти облаçĕсенче те çĕршер ялсене çĕрпе танлаштарса хунă. Тула облаçĕнчи Дедилово ялĕнче оккупантсем 998 килрен 960 киле çунтарса янă, Курск облаçĕнчи Пожидаевка ялĕнче 602 килрен 554 киле, Мускав облаçĕнчи Краснополянски районри Озерецкое ялĕнче 232 килрен 225 киле çунтарса янă. Çав районри 123 килрен тăракан Кобнешки ялне пĕтĕмпех çунтарса янă. Мускав облаçĕнчи Высоковски районри Некрасино ялĕнче 99 килрен 85 киле, Бакланово ялĕнче 69 килрен 66 киле çунтарса янă. Мускав облаçĕнчи Красная Поляна, Мышецкое, Ожерелье, Высоково ялĕсенчен тухса кайнă чухне нимĕçсем автоматчиксене уйăрса хунă та, çаксем вара çуртсем çине çунакан шĕвек сапса çÿресе, вут тивретсе пынă. Ялти халăх пушара сўнтерме хăтлансан, нимĕçсем вĕсене автоматсенчен пенĕ. Мышецкое ялĕнче 80 килрен 5 кил çеç тăрса юлнă, Ожерелье ялĕнче 200 килрен 8 кил, Высоково ялĕнче 76 килрен 3 кил сыхланса юлнă. Çитмĕл çулти старике Ф. К. Григорьева, «ан çунтарăр ман çурта» тесе каланăшăн, персе вĕлернĕ.

Пирĕн хуласемпе ялсене çакăн пек тискеррĕн те ирсĕррĕн çĕмĕрсе пынинче гитлеровецсем пирĕн çĕршыва, совет халăхĕн çитĕнĕвĕсене, ССР Союзĕнчи хресченсен, интеллигенцин пурнăçне лайăхлатмашкăн мĕн туса çитернине хаярррăн курайманни паларса тăрать. Анчах та захватчиксен çак усал преступленийĕсем пур çĕрте те тата çўлтен панă приказ тăрăх пулса пыраççĕ. Нумаях пулмасть Орел облаçĕнчи Верховье хулинчен инçе мар вырăнта тытса илнĕ приказра, нимĕçсен 512-мĕш пехотнăй полкне панăскерĕнче тата Шитинг полковник алă пуснăскерĕнче, чикĕсĕр сĕмсĕрлĕхпе çапла каланă: «Условисене кура эвакуацилеме тивекен зонăра войскăсем чакса кайнă хыççăн пушхир пулса юлмалла. Тĕппипех çĕмĕрсе тăкмалли пунктсенче пур çуртсене те çунтарса ярас пулать, çавна тума малтан çуртсене, пуринчен ытла чул çуртсене, улăм тултарса хурас пулать, чул хуралтăсене взрыв туса сирпĕнтерсе ярас пулать, çавăн пекех тата пуринчен ытла подвалсене çĕмĕрес пулать. Çĕмĕрсе тухнă зона тăвассине лайăх хатĕрленсе, пĕр шелмесĕр тата пĕтĕмпех ĕçе кĕртмелле».

Хĕрлĕ Çар войскисем захватчиксене ăнăçлăн хăваласа кăларакан совет çĕрĕсем çинче пур çĕрте те нимĕçсен командованийĕ хăйĕн войскисене, пирĕн хуласемпе ялсене çĕмĕрсе пырса, «пушхир зони» туса хума хушать. Пирĕн территори çинче халлĕхе тăнă чухне оккупантсем хăйсен ирсĕр ĕçĕсене малалла туса пыраççĕ, хăйсем чакнă чухне вара халăх пурăнакан вырăнсене бандитла майпа «пушхир зони» туса хăвараççĕ. Вĕсем çынсем пурăнакан çуртсене, обществăлла çуртсене, фабрикăсене, заводсене, шкулсене, библиотекăсене, больницăсене, чиркўсене сирпĕнтерсе тата çунтарса яраççĕ.

Германи влаçĕсем йышăнса тăракан ялсенче мирлĕ хресченсене пĕр чарăнусăр çаратаççĕ. Хресченсенчен вĕсен вуншар çулсем хушши тăрăшса ĕçлесе тунă пурлăхĕсене, çурчĕсене, выльăх-чĕрлĕхĕсене, тумтирĕсене, — пурне те, ача-пăча кĕпи таранах, юлашки тырă пĕрчи таранах туртса илеççĕ. Нумай чухне нимĕç оккупанчĕсем, яла йышăнса илсенех ялти халăха, вăл шутра стариксене те, хĕрарăмсене те, пĕчĕк ачасене те, хăйсен çурчĕсенчен хăваласа кăларса яраççĕ те, халăхăн вара землянкăсенче, çĕр хушăкĕсенче, вăрманта е уçă çĕртех те выртса-тăма лекет. Оккупантсем кăнтăрлах çул çинче кам тĕл пулакана, çав шутра ачасене те, салтăнтарса тумтирĕсемпе атă-пушмакĕсене хывса илеççĕ, кам та кам çапла çаратнине хирĕç калама е хирĕç тăма хăтланать, çавна тискеррĕн асаплантарма тытăнаççĕ е пере-пере пăрахаççĕ.

Ростов тата Ворошиловград облаçĕсенче, Украинăра Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă ялсенче оккупантсем хресченсене темиçе хутчен çаратса тухнă; нимĕçсен çав ялсем урлă каякан тĕрлĕ çар чаçĕсем кашниех яла çĕнĕрен ухтарса тухнă, вăрă-хурахла ĕçсем тунă, вут тĕртнĕ, продовольстви паманшăн пере-пере вĕлернĕ. Мускав, Калинин, Тула, Орел, Ленинград т. ыт. облаçсенче те, Хĕрлĕ Çар войскисем халь нимĕç захватчикĕсен юлашкийĕсенчен тасатса пыракан çĕрсенче, çавăн пекех пулнă.

Çапла, Тула облаçĕнчи Маслово ялĕнче нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем халăхран мĕнпур продуктсене туртса илнĕ, çавна пула çав ялта выçăпа кунсерен 1—2 çын вилсе пынă. Нимĕçсем тытса илнĕ çавăн пек ялсем пур çĕрте те тĕл пулаççĕ. Нимĕç захватчикĕсем ялсенче пур çĕрте те мĕнпур продовольстви запасĕсене туртса илеççĕ, выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке пусаççĕ, тырпулсене тата ытти продуктсене илсе каяççĕ, вăрăсем пек, вĕсем килти мĕнпур япаласене, тумтирсене, кĕпе-йĕмсене, атă-пушмаксене, сĕтел-пукансене, ача-пăча вылямалли япаласене йăта-йăта каяççĕ. Ворошиловград облаçĕнчи Голубовка ялĕнче халăхран мĕнпур продовольстви запасĕсене туртса илнĕ пулнă; унтан çав халăхах нимĕçсем тепĕр хут çаратнă, хĕрарăмсемпе ачасен юлашки çимĕçĕсене, килти мĕнпур япаласене, тумтирсене, минтерсемпе одеялăсене, чашăк-тирĕксене, илсе кайма май пуррисене пурне те туртса илнĕ. Уйрăмах çакăн пек фактсем питĕ нумай пулса пыраççĕ: Голубовка ялĕнче М. И. Лещенко колхозницăран, виçĕ çамрăк ача амăшĕнчен, пĕчĕк ача кĕписемпе пальтисене, унтан тата ача-пăча валли юлнă мĕнпур çимĕçсене туртса илнĕ; çав ялтах нимĕç офицерĕпе темиçе салтак В. И. Матиенко учительница патне пырса кĕнĕ те унăн мĕнпур тумтирне тата ача-пăча япалисене илсе кайнă, йăтса каяйман сĕтел-пукана пуртăпа касса çĕмĕрсе хăварнă. Тула облаçĕнчи Прудное ялĕнче нимĕç салтакĕсем 150 инвалид пурăннă çурта çĕмĕрсе кĕнĕ те вĕсен ăшă тумтирĕсене тата продукчĕсене пĕтĕмпех туртса илнĕ, хўтлĕхсĕр çынсене пăшалпа хăратнă; Тула облаçĕнчи Колодезная ялне Хĕрлĕ Çар чаçĕсем ирĕке кăларичченех кăшт маларах нимĕçсем декабрĕн 7-мĕшĕнче çак ялта 32 арçынна тата хĕрарăмсене, вĕсем нимĕçсене хăйсен ăшă тумтирĕсене пурне те мар панă тесе айăпласа, персе вĕлернĕ; Мускав облаçĕнчи Власово ялĕнче колхозницăсенчен пĕрине, нимĕçсем купăстапа çĕрулмине çаратса тухнă чухне вăрă-хурахсене хирĕç тăнăскерне, автоматран персе амантнă. Аманнă хĕрарăм: эсир бандитсем тата вăрă-хурахсем, тесе нимĕçсене ылханса кăшкăрма тытăнсан, нимĕçсем ăна персех вĕлернĕ, çакăн хыççăн кунта пухăннă ял çыннисене те автоматран пере-пере пăрахма тытăннă. Продовольствине пĕтĕмпех мар панă тесе, ăшă тумтирсене пурне те мар панă тесе, продуктсемпе ăшă япаласене парасси çителĕксĕр хăвартлăхсемпе пырать тесе тата ытти сăлтавсемпе те Германи çарĕ пур çĕрте те юнлă репрессисен режимне туса хунă. Мародерсемпе вăрă-хурахсем çинчен Германи влаçĕсене жалоба пама хăтланнисене «коммунистла пропаганда» сарни тата совет влаçне кăмăллани вырăнне хурса хаклаççĕ, жалобăсем паракансене çĕнĕрен асаплантараççĕ.

Хăйсен вăрă-хурахла аллисенчен колхоз пурлăхĕпе колхоз выльăх-чĕрлĕхне кăларса ярас мар тесе, нимĕç захватчикĕсем колхозсенче хăйсен фашистла «управляющийĕсене» лартса тухнă, çавăн пек «управляющисем» пулма Германире гитлерла партири ирсĕр майпа пуйма юрататакан кирек мĕнле çынсене те, хăшпĕр чухне вара пирĕн граждăнсем хушшинчи ирсĕр этемсене те суйласа илеççĕ.

Германи оккупанчĕсем хăйсен приказĕсенче намăса пĕлмесĕр çапла çыраççĕ: «Колхоз çĕрĕ, колхоз пурлăхĕ Германи çарĕн харпăрлăхĕ пулса тăрать», теççĕ. Июлĕн 9-мĕшĕнче кăларнă çавăн пек приказсенчен пĕринче Германи командованийĕ акă мĕнле распоряжени панă: «Çак приказа кăларнă хыççăн 48 сехет хушшинче колхозăн ялти çынсен аллинчи пĕтĕм пурлăхне тивĕçлĕ управляющисене каялла илсе пырса памалла. Приказа пурнăçа кĕртмесен персе вĕлерессĕ». Çапла хăтланаççĕ тискер вăрă-хурахсем-бандитсем пирĕн хресченсемпе тата вĕсен пурлăхĕпе.

Нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ районсенче гитлеровецсем хуласенчи халăха та виçине пĕлмесĕр çаратаççĕ. Хăйсем тытса илнĕ хуласенче пуринче те нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем вырăнти рабочисен, служащисен, интеллигентсен, вăтă пенсионерсен хваттерĕсене çĕмĕре-çĕмĕре кĕрсе каяççĕ те, ниме те шута илмесĕр тата нимĕнле ирсĕр ĕç умĕнче те чарăнса тăмасăр, алла мĕн лекнине пурне те, хаклă япаласенчен пуçласа кил таврашĕнчи пĕчĕк япаласем таранах, илсе çаратса тухаççĕ. Вăрă-хурахсен çак пĕтĕм тискер ĕçĕ юнлă репрессисемпе пĕрле пулса пырать.

Çапла, сăмахран, Орел хулин центрĕнче нимĕçсем виселица туса лартнă та çаратакансене хирĕç тăнă старике çакса вĕлернĕ, унпа юнашар вара халăхран тумтирсемпе кĕпе-йĕмсене çаратнă чухне гитлеровецсене пулăшма килĕшмен темиçе гражданина çакса вĕлернĕ.

Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă Дон çинчи Ростов хулинче нимĕçсем мĕнпур магазинсене çаратса пĕтернĕ, урамра иртсе пыракан çынсен тумтирĕсемпе атă-пушмакĕсене хыва-хыва илнĕ, вĕсен сехечĕсемпе ытти хаклă япалисене туртса илнĕ, хваттерсене массăллăн çаратса çўренĕ, хăйсемпе пĕрле илсе çўреме май çук йывăр япаласене ним тĕллевсĕр пĕтере-пĕтере тăкнă.

Мускав облаçĕнчи Истра хулинче нимĕç оккупанчĕсем халăхран мĕнпуррине йăлтах: кĕпе-йĕмсене, тумтирсене, савăт-сапасене, сĕтел-пукансене тытса илнĕ. Оккупантсем вырăнти рабочисемпе работницăсен тумтирĕсемпе атă-пушмакĕсене урамрах хыва-хыва илнĕ. Вырăнта пурăнакансене хваттерсенчен массăллăн хăваласа кăларнă, вĕсене топливăсăр тăратса хăварнă. Декабрĕн 10-мĕшĕнче нимĕçсем çак хулара пурăнакан 2 пине яхăн çынна ачисемпе пĕрлех Дарно ялĕнчи чиркĕве хăваласа хупнă, вĕсенчен чылайĕшĕ çакăнта шăнса тата выçăпа аптăраса вилнĕ. Истра хулинчен тухса тарнă чухне нимĕçсем хулана çунтарса янă, çакăнпа вара Истра хулинчи хăйсен ирсĕр преступленийĕсене вĕçленĕ.

Германи офицерĕсемпе салтакĕсен вăрă-хурахла ĕçĕ вĕсем тытса илнĕ пур районсенче те пулса пырать. Германи влаçĕсем вăрă-хурахла çаратассине хăйсен çарĕнчи закон туса хунă, çав çаратусемпе ирсĕр ĕçсене пур майсемпе те ырласа пыраççĕ. Çак вăрă-хурахла ĕçсенче Германи правительстви хăй уççăнах каласа пĕлтернĕ бандитла «принцип» пурнăçа кĕнине курать, çав «принцип» тăрăх Германин кашни вояккинех «вăрçăра хăйĕн материальнăй интересĕ пулмалла». Çапла, сăмахран, 1941 çулти июлĕн 17-мĕшĕнче кăларнă секретлă инструкцирех ĕнтĕ, Германи çарĕнчи пропаганда ротисен мĕнпур командирĕсем патне янăскерĕнче тата Германин 68-мĕш пехотнăй дивизине Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем çĕмĕрсе тăкнă чухне тупнăскерĕнче, тўрех çапла тума кирлине кăтартса панă: «Германи çарĕн кашни офицерне тата салтакне вăрçăра вăл хăй материально интересленес туйăмпа воспитани памалла...», тенĕ. Мирлĕ халăха массăллăн çаратма тата вĕлерсе пĕтерме хăйсен çарне тĕртекен çакăн пек приказсене Германипе пĕрле вăрçакан ытти çарсенче те кăлараççĕ. Çапла, сăмахран, Румынин 14-мĕш дивизийĕн штаб начальникĕн Николаеску полковникăн 24220-мĕш №-лĕ приказĕнче çакăн пек çырнă:

«Тырпула, мăйракаллă шултра выльăха, мăйракаллă вĕтĕ выльăха, килти кайăк-кĕшĕке, — çаксене пурне те халăхран çар валли туртса илмелле. Кашни çуртах тĕплĕн ухтармалла та нимĕн те хăвармасăр илсе тухмалла... Кăшт хирĕç тăнăшăнах — çавăнтах персе пăрахмалла, çурчĕсене вара — çунтарса ямалла».

Германипе Совет Союзĕ хушшинчи вăрçă фронтĕнче тата, уйрăмăн илсен, Мускав патĕнче хăйсем çаратса тупнă тумтирпе тумланнă офицерсем, кĕсъисене вăрланă япаласемпе тултарнă тата хăйсем тĕл пулнă хĕрарăмсемпе ачасенчен хывса илнĕ тумтире, атă-пушмаксемпе кĕпе-йĕме танксем çинче турттарса пыракан офицерсемпе салтаксем час та часах тĕл пулаççĕ. Германи çарĕ ытларах та ытларах пăсăлса тискер вăрă-хурахсен тата мародерсен çарĕ пулса пырать, çав вăрă-хурахсем Совет Союзĕн чечекленекен хулисемпе ялĕсене çаратса юхăнтараççĕ, пирĕн ялсемпе хуласенчи ĕççыннисем туса хатĕрленĕ пурлăхсемпе тĕрлĕ пуянлăхсене вăрлаççĕ тата пĕтерсе тăкаççĕ. Гитлерла çар вĕçне çитиех пăсăлса кайнине тата мораль тĕлĕшпе ирсĕрленсе пынине фактсем çирĕплетсе параççĕ, çав гитлерла çарсене вĕсен çаратăвĕшĕн, вăрă-хурахла ĕçĕсемшĕн пĕтĕм совет халăхĕ кураймасăр тарăхать тата пĕтĕм чĕререн ылханать.

II

Германи войскисемпе Германи влаçĕсем пырса çитнĕ совет территорийĕ çинче пур çĕрте те питĕ йывăр пусмăрлăхăн, правăсăрлăхăн тата хўтлĕхсĕр халăха виçине пĕлмесĕр асаплантарассин режимне çийĕнчех туса хураççĕ. Юхăнтарса пĕтернĕ тата пурăнмалли средствăсемсĕр тăратса хăварнă мирлĕ халăх валли оккупантсем каторгăри пек йывăр ĕçĕн режимне туса хураççĕ. Совет граждăнĕсем миçе çултине те, вĕсен сывлăхĕ мĕнлине те пăхмасăр, гитлеровецсем вĕсен çурчĕсене хăйсем йышăнса илеççĕ е çĕмĕрсе тăкаççĕ, çав граждăнсене нумайĕшне вара концентрациллĕ лагерьсене хăваласа каяççĕ, асаплантарассипе, персе пăрахассипе тата выçăхтарса вĕлерессипе хăратса, вĕсене тĕрлĕ йывăр ĕçсем, çав шутрах вăрçăпа çыхăнса тăракан ĕçсене те, тутараççĕ. Вăрçăпа çыхăнса тăракан кирек мĕнле ĕç тутарнă хыççăн чылай чухне, вăрттăнлăха сыхласа хăварас тесе, çав ĕçре ĕçленĕ çынсене пурне те персе вĕлереççĕ.

Çапла, сăмахран, Смоленск облаçĕнчи Колпино ялĕнче оккупантсем хресченсене пурне те Германи чаçĕсем валли кĕперсемпе блиндажсем тума хăваласа кайнă. Çав укрепленисене туса пĕтерсен, хресченсене пурне те персе пăрахнă.

Украинăри Кряков ялĕ патĕнче Днепр çыранĕнче укрепленисем тунине вăрттăнлăхра хăварас тесе, çав укрепленисене тунă çĕрте пулнă вырăнти халăха тата тыткăнри красноармеецсене 40 çынна строительство пĕтнĕ хыççăн нимĕçсем персе вĕлернĕ.

Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă чылай районсенче, пĕр-пĕринчен инçетре вырнаçса тăраканскерсенче, пурăнакан çынсем пĕр кар каласа панă тăрăх, нимĕçсен наступлени тăвакан чаçĕсен умĕнчи участоксемпе объектсенче минăсем пуçтарас тĕлĕшпе уйрăмах хăрушă ĕçре нимĕçсем граждăнла халăха ĕçлеттерсе усă курнă.

Германи командованийĕн чылай документчĕсене Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем хăйсем наступлени туса пынă чухне Ростов патĕнче тытса илнĕ, çав документсем çакна кăтартса параççĕ: уйрăмăнах хăрушă ĕçсенче вырăнти халăха ĕçлеттерессине Германи командованийĕн ятарласа кăларнă инструкцийĕсенче пăхса хунă. Çапла, сăмахран, нимĕçсен 76-мĕш пехотнăй дивизине октябрĕн 11-мĕшĕнче панă приказăн минăсене пуçтарасси çинчен калакан 6-мĕш пунктĕнче çапла çырнă:

«Пурнăçшăн хăрушă [illegible] тыткăнри çынсемпе тата вырăнти халăхран суйласа илнĕ çынсемпе усă курмалла».

Çакă вăл пĕтĕм тĕнчери кирек мĕнле мерăсене те тата этемлĕх моралĕн кирек мĕнле правилисене те пăснине кăтартакан нумай тĕслĕхсенчен пĕри кăна. Çавăн пек пăснисемпе Германи командованийĕ хăйне ирсĕрлĕхпе витсе хучĕ.

Ирĕксĕр ĕçлеттерме вăйпа илсе кайнă çынсене Германи влаçĕсем тыткăнри çынсен шутне кĕртеççĕ тата тыткăна лекнĕ çынсен режимĕпе тытса усраççĕ. Çакна палăртнă: Германи çарĕн штабĕсем тăратакан донесенисенче нимĕçсен аллине лекнĕ хресченсене тата ытти мирлĕ халăха, ирĕксĕр ĕçлеттерме хăваласа кайнăскерне, нимĕнле уйăрса тăмасăрах, «тыткăна лекнĕ çар çыннисен» шутне кĕртеççĕ, çапла майпа «тыткăна лекнĕ çар çыннисен» шутне законсăр майпа ўстереççĕ. Çапла ĕнтĕ, тыткăна лекнĕ çынсем валли нимĕçсен фашистла влаçĕсем туса хунă этемле мар режим граждăнла халăха та пырса тивет.

Тула облаçĕнчи Плавск хули патĕнче лагерь тунă пулнă, унта тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе пĕрле таврари ялсенчи граждăнла халăха та усранă. Лагере хупнă хресченсем хушшинче подростоксемпе стариксем те пулнă. Вĕсене пурне те талăкра икĕ çĕрулми тата кăштах урпа пăтти панă. Лагерьте пулнă хресченсене шыв паман, шыв вырăнне юр çиме хушнă. Лагерьте кашни талăкрах унти çынсен 25—30 проценчĕ вилнĕ. Хупса лартнă çынсем ушкăнсемпе пухăнса тăрсан, нимĕçсем ним асăрхаттармасăрах çавăн пек ушкăнсем çине пăшалсенчен пенĕ. Полтава облаçĕнчи Березняки ялĕнче Германи командованин приказне кăларса çакнă, çав приказра çапла каланă: вырăнти çынсем ĕçлеме тухмасан, вĕсене персе пăрахаççĕ, тенĕ.

Мирлĕ пурăнакан нумай пиншер çынсене оккупантсем çывăхри районсенче ирĕксĕр ĕçлеттерме кăна мар хăваласа каяççĕ, тата нимĕç помещикĕсем патĕнче выçă тата чуралла йывăр ĕç туса пурăнма Германин инçетри тылне те хăваласа каяççĕ. Смоленск облаçĕнчи Ильянски районри Лучана, Семица, Дубовецкое, Королевщина, Абрамовщина ялĕсенчен кăна ирĕксĕр ĕçлеттерме илсе кайнă çĕршер хресченсем пĕр хыпарсăрах çухалнă.

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче Мускав облаçĕнчи Звенигород районĕнчи Фаустово ялне пырса кĕрсен, нимĕçсем мĕнпур халăха пухнă та, арçынсемпе сывă хĕрарăмсене суйласа илсе, хăйсен инçетри тылне илсе кайнă.

Каялла чакнă чухне нимĕçсем Звенигород районĕнчи Ершово, Скоково, Функово ялĕсенчи, çавăн пекех тата Мускав облаçĕнчи Солнечногорск районĕнчи Есипово ялĕнчи пĕтĕм халăха хăйсен тылне хăваласа кайнă, çав ялсене пурне те çунтарса янă. Мускав, Калинин, Тула, Рязань тата Орел облаçĕсенчи халĕ ирĕке кăларнă ытти нумай ялсенче те çавăн пекех хăтланнă.

Харьков облаçĕнчи Шевченко районĕнчи Худоярово, Новый Лиман тата ытти чылай ялсенчен тухса кайнă чухне нимĕçсем çав ялсене тĕппипех çунтарса янă, ўссе çитнĕ çынсене пурне те хăйсемпе пĕрле хăваласа кайнă.

Нимĕçсем хăйсем тытса илнĕ совет хулисенче те çавăн пекех йывăр ĕçĕн тата концентрациллĕ лагерьсен режимне туса хураççĕ.

Çапла, сăмахран, Киева илнĕ хыççăн нимĕçсем граждăнла халăха 11 султан 60 çула çитнĕ çынсене пурне те, профессисене пăхса тăмасăр, арçынне-хĕрарăмне тата сывлăхне, национальноçне пăхса тăмасăр, пурне те ĕçлеме хăваласа пухнă. Ура çинче тăма пултарайман чирлĕ çынсем çине ĕçлемесĕр юлнă кашни куншăн нимĕçсем 50-шар тенкĕ штраф хунă.

Украинăри тепĕр хулара — Днепропетровск облаçĕнчи Пятихатка хулинче—нимĕçсем çул тăвас тĕлĕшпе ирĕксĕр ĕçлеттерме пĕтĕм халăха хăваласа пухнă, вĕсене талăкра 20-шер сехет ĕçлеттернĕ, çăкăр та, шыв та паман. Халран кайса ўкекен стариксемпе хĕрарăмсене гитлеровецсем прикладсемпе хĕнесе вăйпах ĕçлеттернĕ, нимĕне те шута илсе тăман, хытă асаплантарассипе тата персе пăрахассипе хăратнă.

Харьковра оккупантсем вырăнти украинец-интеллигентсенчен уйрăмах мăшкăллама шут тытнă. Ноябрĕн 5-мĕшĕнче актерсене пурне те Шевченко ячĕпе тăракан театр çурчĕ патне регистрацине тăма пымашкăн распоряжени панă. Артистсем пухăнса çитсен, вĕсене нимĕç салтакĕсем çавăрса илнĕ те, урапасене кўлсе лартса, чи нумайрах халăх çўрекен урамсем тăрăх юханшыв патне шыв тултарма хăваласа кайнă.

Оккупациленĕ облаçсенче пуринче те Германи правительстви вырăнти фашистла пуçлăхсем пулма гитлерла партири ирсĕр этемсене лартса тухнă, çав ирсĕр этемсем граждăнсен нимĕнле прависене те, халăхăн нимĕнле нациллĕ уйрăмлăхĕсене те шута илмеççĕ, пурне те нимĕçлетессишĕн тăрăшаççĕ тата совет государствинче чечекленсе пурăннă республикăсен—Украинăн, Белоруссин, Литван, Латвин, Эстонин, Молдавин—кирек мĕнле палăрăмĕсене те пĕтерсе тăкма хăтланаççĕ. Украина, Белорусси, Литва, Латви, Эстони, Молдави халăхĕсене чĕртсе ура çине тăратас тĕлĕшпе çак советлă республикăсем питех те пысăк ĕç тунине, çав халăхсен нациллĕ культурине, Совет Союзĕнче тăванла туслăхра пурăнакан ытти мĕнпур халăхсем аталантарнă пекех, пур майсемпе те аталантарас тĕлĕшпе пысăк ĕç тунине нимĕç захватчикĕсем пĕлсе тăраççĕ. Çак халăхсене нимĕçлетме тата хăйсене пăхăнтарма нихăçан та пултараяс çуккине мăка пуçлă фашистсем курса ĕненеç-ха. Советăн ирĕке юрататакан халăхне тата Украинăри, Белоруссири, Латвири, Литвари, Эстонири, Молдавири ирĕке юратакан халăхсене асаплантарас тĕлĕшпе нимĕç захватчикĕсем вĕçĕ-хĕррине пĕлмеççĕ. Украинăн, Белоруссин т. ыттисен нациллĕ культурисене пĕтерсе тăкасси, аваллăх памятникĕсене, шкулсене, литературăна пĕтерсе тăкасси тата халăха, унăн национальноçне пăхмасăр, ирĕксĕр нимĕçлетесси нимĕçсем оккупациленĕ вырăнсенче пур çĕрте те, çаратусемпе асаплантарнисем тата çунтарса янисемпе массăллă вĕлерўсем пулса пынă пекех, ирсĕр майсемпе пулса пыраççĕ.

Вырăс культурине çавтери тискеррĕн пĕтерсе тăкма тăрăшса, нимĕç захватчикĕсем Германи фашизмĕн пĕтĕм ирсĕрлĕхĕпе вандализмне кăтартса пачĕç. Пĕтĕм тĕнчешĕн паллă Ясная Полянăра, этемлĕхĕн чи аслă генийĕсенчен пĕри—Лев Толстой пурăннă тата ĕçленĕ вырăнта, нимĕçсем уйăх çурăна яхăн пурăнчĕç. Вырăс культурин çак мухтавлă памятникне, декабрĕн 14-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем оккупантсенчен тасатнăскерне, нацистла вандалсем çĕмĕрсе, ирсĕрлетсе пĕтернĕ, юлашкинчен вара вут тивретсе янă. Аслă писателĕн вилтăприне оккупантсем ирсĕрлетсе хăварнă. Лев Толстойăн пурнăçĕпе тата ĕçĕпе çыхăнса тăракан, ниçта тупма çук памятниксене—алçырăвĕсене, кĕнекесене, картинăсене нимĕçсен военщини е вăрласа пĕтернĕ, е кăларса пăрахса пĕтерсе тăкнă. Музей сотрудникĕсем аслă писателĕн сĕтел-пуканĕсене тата кĕнекисене çунтарма пăрахса, вутăпа хутма ыйтни çине ответлесе, Германи офицерĕ Шварц çапла каланă: «Вутă шире кирлĕ мар, сирĕн Толстой ячĕпе çыхăнса тăракан япаласене эпир пурне те çунтарса ярапăр».

Декабрĕн 16-мĕшĕнче совет войскисем Клин хулине ирĕке кăларнă чухне çакна палăртнă: вырăссен аслă композиторĕ П. И. Чайковский пурăннă тата ĕçленĕ çурта, совет государстви музей туса хунăскере, нацистсен офицерĕсем-

Юлашки 2-мĕш страницăра

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ нотин юлашки

не салтакĕсем çĕмĕрсе тата çаратса пĕтерчĕ. Сурт-музейĕн пӳлĕмĕсенче урса кайнă оккупантсем мотоциклсем валли гараж туса хунă, çав гаража мурейри кĕнекесене, сĕтел-пукансене тата ытти экспонатсене çунтарса ăшăтнă, экспонатсенчен пĕр пайне Германи вăрă-хурахĕсем çаратса илсе кайнă. Çакна тунă чухне нацистла офицерсем хăйсене вырăс культурин чи паха памятникĕсенчен мăшкăлланине пĕлсе тунă.

Истра хулине оккупациленĕ хыççăн нимĕç войскисем вырăссен чи авалхи паха монастырĕнче, Новый Иерусалим ятлă монастырьте, 1654-мĕш çулта [illegible], 18-мĕш ĕмĕрте паллă архитекторсем—Растреллипе Казаков [illegible] боеприпассен склачĕ туса хунă. Новый Иерусалим [illegible] монастырĕ вырăс халăхĕн [illegible] паллă памятникĕ пулса тăрать [illegible]. Анчах, çапла пулин те, Истрăран туха тарнă чухне [illegible] фашистсем [illegible] Новый Иерусалим [illegible] сирпĕтнĕ.

Нимĕçсем СССР Союзĕнчи халăхсен [illegible] памятникĕсене [illegible] çĕмĕрсе пĕтерчĕç. Нимĕç оккупанчĕсем [illegible] Украинăри, Канев хулинче вĕсем Украина халăхĕн аслă поэчĕн Тарас Шевченкон памятникне, çакнашкалах тата Тихвин хулинче — вырăс халăхĕн аслă композиторĕ Римский-Корсаков пурăннă сурта, Таганрогра — тĕнчипе паллă вырăс писателĕн Чеховăн çуртне тата ытти культура памятникĕсене те нумай ишĕлтерсе пĕтерчĕ.

Германи захватчикĕсем хăйсем тытса илнĕ Совет республикисен районĕсенче вырăссен, украинецсен, белоруссен, латышсен, литовецсен, эстонецсен, молдавансен [illegible] еврейсенчен, грузинсенчен, армянсенчен, узбексенчен, азербайджансенчен, таджиксенчен тата совет халăхĕсен ытти представителĕсенчен те, Совет Союзĕн [illegible] шутпа çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Çавăнпа та ĕнтĕ Совет Союзĕнчи халăхсем, никам çапса аркатайми хăватлă та аслă вăй пулса тăрса, ылханлă тăшмана — Германин вăрă-хурахла çарне хирĕç пурте пĕр харăс çĕкленчĕç.

III

Нимĕçсен фашистла офицерĕсемпе салтакĕсем совет граждăнĕсемпе гражданкисенчен вĕçĕмсĕр, ирсĕррĕн мăшкăлласа кулни, вĕсене массăллăн вĕлерни, хĕрарăмсене ирĕксĕрлесе пусмăрлани пирки тарăхса çĕкленекен халăх çилли вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк. Çав çилĕ пĕтĕм совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсен чĕринче вĕресе тăрать. Германи штыкĕ пуçпулса тăма тытăнакан вырăнсенче пур çĕрте те юнлă терропа хăрушă асаплантарусен тата тискер вилĕмĕн чăтма çук йывăр режимĕ асма тытăнать. Германи офицерĕсемпе салтакĕсем пур çĕрте те туса ирттерекен çаратусем питĕ нумай çынсене нимĕн айăпсăрах хĕненипе тата вĕлернипе пĕрле пулса пыраççĕ. Пĕтĕм апат-çимĕç тавраш-не пĕр тĕпренчĕк юлмиччен, е çи-пуç тавраш-не юлашки кĕпе юлмиччен хăйсене паманшăн оккупантсем ватă стариксемпе çамрăксене, хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене çака-çака вĕлереççĕ. Ирĕксĕрлесе ĕçлеттернĕ çĕрте хăйсем туса панă ĕç нормисене тултарайманшăн вĕлерес пек хĕнеççĕ е персе пăрахаççĕ.

Июнĕн 30-мĕшĕнче гитлерла бандитсем Львов хулине пырса кĕнĕ. Çак хулара вĕсем тепĕр куннех «вĕлер еврейсемпе поляксене» текен лозунгпа «юнлă мунча» туса ирттернĕ. Темиçе çĕр çынна вĕлерсе пĕтернĕ хыççăн гитлерла бандитсем пассаж çурчĕ умĕнче хăйсем вĕлернĕ çынсен выставкине тунă. Çуртсен стенисем çумне вĕсем асаплантарса пĕтернĕ çынсен виллисене купаласа тултарнă. Вĕлернисем хушшинче пуринчен ытларах хĕрарăмсем пулнă. Çак тискертен те тискер «выставкăн» малти вырăнĕнче пĕр хĕрарăм вилли выртнă; фашистсем çав хĕрарăмăн ӳчĕ çумне унăн ачине штыкпа тирсе пăталаса лартнă пулнă.

Вăрçă пуçлансанах çакăн пек пулнă гитлеровецсен çавтери тискер ĕçĕсем. Нимĕн айăпсăр çынсен юнĕ ăшне путса пыракан гитлерла мерзавецсем хăйсен ирсĕр ĕçĕсене халĕ те тума чарăнмаççĕ.

Мускав çывăхĕнчи Красная Поляна ятлă поселокра нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем декабрĕн 2-мĕшĕнче вырăнти халăха, 15 çултан пуçласа 60 çула çитичченхисене пурне те, райисполкомăн чӳречисене çапса çĕмĕрнĕ сивĕ çуртне хупса лартнă, вĕсене 8 кун хушши çăкăр та, шыв та паман. Красная Полянăри фабрикăран çак асапа лекнĕ А. Зайцева, Т. Гудкина, О. Налеткина тата М. Михайлова работницăсен кăкăр ĕмекен ачисем аларах вилсе кайнă.

Гитлеровецсем совет ачисене хăйсен автомачĕсенчен пемелли мишень туса хуни çинчен калакан тĕслĕхсем те сахал мар.

Краснополянски районра, Белый Раст ятлă ялта нимĕçсен ӳсĕр салтакĕсен ушкăнĕ пĕр çурт крыльци çине мишень вырăнне 12 çулти Володя Ткачева кăларса тăратнă та ун çине автоматсенчен пеме пуçланă. Çак ачана пĕтĕмпех пульăсем шăтарса пĕтернĕ. Кун хыççăн бандитсем çуртсен чӳречисем витĕр нимĕн тĕлли-паллисĕр пеме тытăннă. Хăйĕн висĕ ачипе урам хушшипе иртсе пыракан колхозница И. Мосоловăна фашистсем тытса чарнă та ачи-пăчисемпе пĕрлех персе вĕлернĕ.

Дубински районри Воскресенское ялĕнче гитлеровецсем мишень вырăнне висĕ çулти арçын ачана тăратнă та, ун çине пулеметран персе, пулемет мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе пăхнă.

Курск облаçĕнчи Волово район центрĕнче (кунта нимĕçсем тăватă сехет хушши тăнă) нимĕç офицерĕ Нойкова ятлă хĕрарăмăн икĕ çулти ывăлне макăрнăшăн кăна уринчен тытнă та пуçĕпе стена çумне çапса вĕлернĕ.

Орел облаçĕнчи Злобин ялсоветĕнче фашистсем Кратов ятлă колхозникĕн икĕ çулти ачине, макăрса нимĕç салтакĕсене çывăрма паманшăн, тискеррĕн вĕлернĕ.

Калинин облаçĕнчи Семеновское ятлă ялта нимĕçсем красноармеец арăмне, висĕ ача амăшне, кĕç-вĕç ача çуратма вăхăт çитнĕскерне, 25 çулти Ольга Тихоновăна ирĕксĕрлесе пусмăрланă, вĕсем унăн аллисене шпагатпа çыхса лартнă. Пусмăрланă хыççăн нимĕçсем унăн пырне касса татнă, икĕ кăкрине чиксе шăтарнă, унтан кăкрисене шăтарнă чух мĕскĕн хĕрарăм мĕнле асапланни çине савăнса пăхса тăнă. Çав ялтах оккупантсем 12—13 çулти арçын ачана персе вĕлернĕ те унăн çамки çинче пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр касса кăларнă.

Ноябрь уйăхĕнче Калинин хулинчи телеграфистка К. Иванова, Леонид ятлă 13 çулти ывăлĕпе пĕрле Калинин çывăхĕнчи Бурашово ялне, хăйĕн хурăнташĕсем патне, кайма тухнă. Вĕсен хула çуммипе иртмелле пулнă. К. Ивановăпа ывăлĕ хуларан тухсанах вĕсене гитлеровецсем асăрханă та, вĕсем çине 60 метртан пеме пуçланă. Пуля тивнипе ача çавăнтах вилнĕ. Амăшĕ хăйĕн ачин виллине илсе каяс тесе темиçе хутчен те пикенсе пăхнă, анчах вăл ачи патне пыма тăрсан кашни хутрах нимĕçсем ун çине пеме тытăннă, çавăнпа та унăн ачине вилнĕ вырăнтах пăрахса хăварма лекнĕ. Çак ача виллине нимĕçсем 8 кун хушши вырăнтан тивтермен. Ăна К. Иванова çак вырăна пирĕн войскăсем килсе йышăнсан тин илсе кайса пытарнă.

Дон çинчи Ростовра ремесленнăй училищĕре вĕренекен 15 çулти Витя Черевичный кил картишĕнче хăйĕн кăвакарчăнĕсемпе выляса ларнă. Çав вăхăтра нимĕç салтакĕсем иртсе пынă, вĕсем унăн кăвакарчăнĕсене туртса илме пуçланă. Витя парасшăн пулман. Вара ăна нимĕçсем урама сĕтĕрсе тухнă та кăвакарчăнсене хăйсене паманшăн 28-мĕш линипе 2-мĕш Майский урам кĕтессинче персе вĕлернĕ. Гитлеровецсем çак ачан питне атă кĕлисемпе тапта-тапта, этем паллаймалла мар пуличченех çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Пирĕн войскăсем сентябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче ирĕке кăларнă Басманово ялĕ (Смоленск облаçĕ, Глинковин районĕ) кунта нимĕçсем хуçа пулса пурăннă хыççăн кĕл кăна пулса юлнă. Ку яла килсе кĕрсен малтанхи куннех фашистла тискер кайăксем шкулсенче вĕренекен арçын ачасемпе хĕрачасене 200 çынна ытла яла уборкăна пынăскерсене, хире хăваласа тухнă та, пур енчен те хупăрласа илсе, тискеррĕн персе вĕлернĕ. Шкулта вĕренекен хĕрсенчен нумайĕшĕсене вĕсем офицерсем валли хăйсен клубне илсе кайнă.

Хуласемпе ялсем тытса илнĕ хыççăн фашистсем нимĕнрен малтан виселицăсем тăва-тăва лартаççĕ, вара нимĕç палачĕсем хулара е ялта пурăнакан мирлĕ çынсенчен кам малтан куç тĕлне пулать, çавна çакса вĕлереççĕ. Çакса вĕлернисене вĕсем темиçе кун, тепĕр чух темиçе эрне хушши виселица çинчен вĕçермесĕрех тăратаççĕ. Хуласемпе ялсен урамĕсем хушшинче персе вĕлернĕ çынсене те вĕсем çаплах, пĕр вырăнтах темиçе кун пуçтарттармасăр выртараççĕ.

Харьков хулине тытса илнĕ хыççăн Германи вăрă-хурахĕсем темиçе çынна хула варринчи пысăк çуртăн чӳречисенчен çакса вĕлернĕ. Кунсăр пуçне çав Харьковрах ноябрĕн 16-мĕшĕнче фашистсем темиçе çурт балконĕсенчен 19 çынна çакса вĕлернĕ, вĕсенчен пĕри хĕрарăм пулнă. Калинин облаçĕнчи Великолукски районри Черепесск ялсоветĕнче оккупантсем 7 хресчен çемьине персе пăрахса вут çинче çунтарса янă.

Ленинград облаçĕнчи Тихвин хулинче пĕр çуртра пĕрремĕш рангри военврач Рамзанцев юлташ виллине тупнă. Унăнне фашистсем сăмсине касса илнĕ, аллисене пăрса лартнă, пуç тирне сӳсе илнĕ тата мăйĕнчен темиçе çĕртен штыкпа чиксе шăтарнă.

Украинăри Воронки ялĕнче нимĕçсем аманнă красноармеецсене, тыткăна лекнисене тата медицина сестрисене, 40 çынна ĕлĕк больница пулнă çурта илсе пырса вырнаçтарнă. Медицински персоналран вĕсем сурансене çыхмалли материалсене, медикаментсене, апат-çимĕç продукчĕсене тата ытти хатĕрсене пĕтĕмпех туртса илнĕ. Медсестрасене ирĕксĕрлесе пусмăрланă хыççăн персе вĕлернĕ, аманнă красноармеецсем патне хурал тăратнă, унтан тăватă кун хушши вĕсем патне никама та яман. Аманнисенчен нумайĕшĕсем вилнĕ, ыттисене фашистсем каярахпа юханшыва тухса ывăтнă та вĕсен виллисене никама та пуçтарма хушман. Совет граждăнĕсене вĕлернĕшĕн, вĕсене вĕлерни нимĕн сăлтавсăр тискер ĕç пулса тăрать пулин те, нимĕçсенчен никам та ответ тытмасть. Пачах та урăхла: совет граждăнĕсене вĕлерме нимĕçсен влаçĕсем хăйсем хĕтĕртсе хавхалантарса пыраççĕ.

Нимĕç фашисчĕсем хăйсем тытса илнĕ районсенче пур çĕрте те хĕрсемпе хĕрарăмсене ирсĕррĕн ирĕксĕрлесе пусмăрлаççĕ.

Смоленск облаçĕнчи Березовка ялĕнче ӳсĕр нимĕç салтакĕсем 16-ран пуçласа 30 çула çитичченхи хĕрарăмсене пурне те ирĕксĕрлесе пусмăрласа хăйсемпе пĕрле илсе кайнă.

Смоленск хулинче Германи çарĕн командованийĕ пĕр гостиница çуртĕнче офицерсем валли публичнăй çурт уçнă. Çав çурта вĕсем çĕршер хĕрсемпе хĕрарăмсене вăйпах хăваласа илсе пынă, вĕсене аллисенчен, çӳçĕсенчен сĕтĕрнĕ, чул сарнă урамсем тăрăх нимĕн хĕрхенме пĕлмесĕр сĕтĕрсе çӳренĕ.

Тискерленсе кайнă нимĕç фашисчĕсем ăçта çитнĕ унта çуртсене çĕмĕрсе каяççĕ, хĕрарăмсемпе хĕрсене хăйсен тăванĕсемпе вĕсен ачи-пăчисен куçĕ умĕнчех пусмăрласа намăслантараççĕ, вĕсенчен ирсĕррĕн мăшкăлласа кулаççĕ, унтан çавăнтах пере-пере вĕлереççĕ.

Львов хулинче Германи штурмовикĕсем Львоври çĕвĕ çĕлекен фабрикăра ĕçлекен 32 работницăна ирĕксĕрлесе пусмăрланă, унтан персе вĕлернĕ. Ӳсĕр нимĕç салтакĕсем Львоври хĕрсемпе çамрăк хĕрарăмсене Костюшко паркне сĕтĕре-сĕтĕре кĕрсе тискеррĕн пусмăрласа мăшкăлланă. Ватă священника В. Л. Помазнева, хĕрсене пусмăрлассинчен умне хĕрес тытса хӳтĕлеме тăнăскере, фашистсем çавăнтах хĕнесе тăкнă, ун çинчи рясине сӳсе илнĕ, сухалне çунтарса янă, унтан штыксемпе чиксе пăрахнă.

Белоруссире, Борисово хули çывăхĕнче, нимĕç çарĕсем сывхарса килнипе килĕсенчен тухса тарнă 75 хĕрарăм гитлеровецсен аллине лекнĕ. Вĕсенчен вăтăр улттăшне нимĕçсем тискеррĕн пусмăрласа мăшкăлланă. Нимĕç офицерĕ Гуммер хушнă тăрăх, салтаксем 16 çулти хĕре Л. И. Мальчиковăна вăрмана илсе кайнă та ирĕксĕрлесе пусмăрланă. Нумаях мар вăхăт иртсен, çав вăрманах хăваласа илсе килнĕ хĕрарăмсем йывăççем çумĕнче хăмасем тăнине курнă. Хăмасем çумне штыксемпе тирсе пĕр хĕрарăма пăталаса хунă пулнă. Çав хĕрарăм — кăшт çеç сывлăшĕ тухса кайман Мальчикова пулнă, унăнне фашистсем ытти хĕрарăмсем пăхса тăнă çĕртех, уйрăмăн илсен, В. И. Альперенкопа В. М. Березникова куçĕ умĕнчех, кăкрисене касса илнĕ.

Мускав облаçĕнчи Звенигород районĕнчи Боровски ялĕнчен каялла чакса кайнă чухне фашистсем темиçе хĕрарăма хăйсен пĕчĕк ачисенчен ирĕксĕр уйăрса, хĕрарăмсем вĕсене ачасенчен ан уйăрăр тесе куççульпех тархасланă пулин те, хăйсемпе пĕрле хăваласа илсе кайнă.

Ленинград облаçĕнчи Ситрин хулинче 15 çулти хĕр М. Колодецкая снаряд ванчăкĕ тивнипе аманнă пулнă. Ăна фашистсем госпитале илсе пынă, ку çурт монастырь пулнă, унта аманнă нимĕç салтакĕсем выртнă. М. Колодецкая аманнă пулин те, ăна пĕр ушкăн нимĕç салтакĕ вăйпах ирĕксĕрлесе пусмăрланă. Çакăн пирки М. Колодецкая часах вилнĕ.

Юлашки вăхăтра нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă ялсемпе хуласенчен, сăмахран, Мускав, Ленинград, Калинин, Тула, Орел, Курск, Ворошиловград, Сталино, Ростов облаçĕсенчи тĕрлĕ районсенчен нимĕçсем хăйсем ку вырăнсенче ашкăнса пурăннă чух хĕрарăмсемпе хĕрсенчен, школьницăсенчен, пĕчĕк ачасенчен ирсĕррĕн мăшкăллани çинчен, вĕсене ирĕксĕрлесе пусмăрлани çинчен сведенисем килсе тăраççĕ. Пусмăрçăсем нумай чухне хăйсен жертвисене вĕлерсе-вĕлере пынă.

Анчах гитлеровецсем совет çыннисене уйрăмшарăн вĕлернипе те çырлахман-ха. Вăхăтлăха тытса илнĕ совет территорийĕ çинче гитлеровецсем туса ирттернĕ вăрă-хурахла ĕçсемпе террор историйĕнче совет граждăнĕсене массăллăн вĕлерни уйрăмах тĕлĕнмелле хăрушлăхпа палăрса тăрать. Хуласене, ялсене тата халăх пурăнакан ытти вырăнсене тытса илнĕ хыççăн совет çыннисене массăллăн вĕлересси — нимĕçсемшĕн кулленхи йăла пулса тăнă.

Акă нимĕç оккупанчĕсем совет çыннисене пĕтĕм ялĕ-ялĕпех вĕлерсе пĕтерни çинчен кăтартса паракан хăшпĕр тĕслĕхсем. Смоленск облаçĕнчи Яскино ялĕнче гитлеровецсем ватă стариксемпе ачасене пĕр çын юлмиччен персе вĕлернĕ, çуртсене вут тĕртсе çунтарса янă. Починок ялĕнче (çав облаçах) нимĕçсем ватă стариксемпе карчăксене тата ачасене колхоз правленийĕн çуртне хупса лартса питĕрсе илнĕ те чĕрĕллех çунтарса янă. Житомир облаçĕнчи украинецсен Емельчино ятлă ялĕнче нимĕçсем пĕр пĕчĕк пӳрте 68 çынна хупса лартнă. Пӳрчĕн алăкĕпе чӳречисене сывлăш кĕмелле мар туса питĕрсе хунă, çавна пула шалти çынсем пурте сывлăш çитменнипе пăчăхса вилнĕ. Мускав облаçĕнчи Звенигород районĕнчи пирĕн войскăсем халь ирĕке кăларнă Ершово ялĕнчен чакса тухса кайнă чухне нимĕçсем мирлĕ халăхпа аманнă красноармеецсене 100 çынна яхăн чиркĕве хăваласа хупнă та ăна тултан çăрапа питĕрсе илнĕ, унтан взрыв туса сирпĕнтернĕ. Ростов облаçĕнчи Аграфенковка ялĕнче фашистсем ноябрĕн 16-мĕшĕнче 16 çултан пуçласа 70 çула çитичченхи мĕнпур арçынсене арестленĕ, унтан кашни висĕ çынтан пĕрине персе пăрахнă.

Нимĕç захватчикĕсем Украина столицинче — Киевра — хăрушла погром туса темĕн чул çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕç бандичĕсем темиçе кун хушшинче арçынсемпе хĕрарăмсене, стариксемпе ачасене 52.000 çынна вĕлерсе тураса тăкнă, совет влаçĕшĕн тăнине мĕнле те пулин палăртнă çынсене — украинецсене, вырăссене, еврейсене— пурне те вĕсем нимĕн хĕрхенмесĕр вĕлерсе пĕтернĕ. Киев хулинчен тухса тарнă совет граждăнĕсем çавтери тискер те хăрушла погромсенчен пĕрин çинчен çапла каласа кăтартаççĕ. Киев хулинчи еврейсен масарĕ çине гитлеровецсем темĕн чухлĕ еврейсене хăваласа пынă; çав шутра пур çулсенчи хĕрарăмсемпе ачасем те пулнă. Çак çынсене фашистсем персе вĕлерме илсе пынă пулнă. Персе вĕлерес умĕн вĕсене пурне те çарамаслантарнă, халран кайиччен хĕненĕ; унтан çак çынсенчен персе вĕлерме пĕр ушкăнне суйласа илнĕ те лупашкана ӳпне выртарса автоматсенчен персе вĕлернĕ, нимĕçсем вĕсене çиелтен кăштах тăпрапа витнĕ те çавсем çинех тепĕр ушкăн еврей выртарса автоматсенчен персе вĕлернĕ.

Украинăри ытти хуласенче те нимĕç оккупанчĕсем темĕн чухлĕ халăха массăллăн пере-пере вĕлернĕ. Нимĕç бандичĕсем хĕçпăшалсăр та хӳтĕлĕхсĕр еврей çыннисене уйрăмăнах нумай вĕлерсе пĕтернĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, Львов хулинче 6.000 çынран кая мар, Одессăра — 8.000 çын ытларах, Каменец-Подольскра — 8.500 çынна яхăн персе е çакса вĕлернĕ, Днепропетровскра 10.500 çынна ытла пулеметсенчен персе пăрахнă, Мариупольре вырăнти халăха 3.000 çынна ытла персе вĕлернĕ. Вĕлернисен шутне стариксем, хĕрарăмсем, пĕчĕк ачасем те нумай кĕреççĕ. Вĕлерес умĕн гитлеровецсем вĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çаратнă, çири тумтирĕсене çатта-çарамас юличченех хыва-хыва илнĕ. Нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем Керчь хулинче, малтанлăха шута илнĕ тăрăх, 7.000 çынна яхăн вĕлернĕ.

Нацистсем этем юнĕшĕн çăткăнланасси Ростов хулинчи халăх тĕлĕшĕпе уйрăмăнах вăйлă пулнă. Ростов хулинче вунă кун хушши тăрса нимĕçсем уйрăм çынсемпе çемьесене çеç мар, юн шăршипе урса кайса темиçешер çĕр çынна, уйрăмăнах рабочисем пурăнакан кварталсенчи çынсене тураса тăкнă. Чугунçул управленийĕн çурчĕ умĕнче нимĕç автоматчикĕсем кăнтăр кунĕнчех 48 çынна персе пăрахнă. Ростов хулин тĕп урамĕн тротуарĕ çинче гитлерла пуçкасакансем 60 çынна персе вĕлернĕ. Армянсен масарĕ çинче 200 çынна вĕлернĕ. Пирĕн войскăсем Ростов хулинчен хăваласа кăларнă генералсемпе офицерсем хăйсемех пĕтĕм халăх куçĕ умĕнче: «Эпир Ростова унти халăха юн ăшне путарса тавăрмашкăнах тепре килетпĕр-ха», тесе мухтаннă, мĕншĕн тесен Ростов ĕççыннийĕсем хăйсен тăван хулинчен ылханлă тăшмана хăваласа кăларас ĕçре Хĕрлĕ Çар чаçĕсене питĕ вăйлăн пулăшнă.

Кунта кăтартса тухнисемсĕр пуçне, Совет правительствин аллинче нимĕçсен фашистла командованийĕн çавтери тискер те хăрушла преступленине кăтартса паракан, вĕсем Хĕрлĕ Çар войскисене хирĕç çапăçнă чухне мирлĕ пурăнакан совет çыннисене мала кăларса тăратса, хăйсем вĕсен хӳттипе хӳтĕленсе пынине кăтартса паракан документальнăй материалсем те сахал мар.

1941 çулти августăн 28-мĕшĕнче нимĕçсен фашистла войскисем Ипуть юханшывĕ урлă каçнă чухне, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем хăйсене хирĕç вăйлăн тăнине çĕнтерме пултарайманнипе, Гомель облаçĕнчи Добруш ятлă белорус хулинчи халăха хăваласа тухнă та хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене тата стариксене, персе вĕлерессипе хăратса, хăйсен умне кăларса янă; хăйсем, вĕсен хӳттине пытанса, çапăçу йĕркине сухатмасăрах, наступлени туса пынă.

Германи çарĕн командованийĕ çакăн пек ирсĕр меслетпех Ленинград облаçĕнчи «Выборы» ятлă совхоз районĕнче, çакнашкалах тата Смоленск облаçĕнчи Ельня районĕнче те усă курнă. Фашистла мерзавецсем çак ирсĕр меслетпе, хăйсен хăравçăлăхне пула, юлашки вăхăтченех усă кураççĕ. Декабрĕн 8-мĕшĕнче гитлеровецсем Тула облаçĕнчи Ямное ятлă ялтан тухса тарнă чухне хăйсен хыçне кăларса тăратнă вырăнти халăх хӳттине пытанса каялла чакса пынă. Декабрĕн 12-мĕшĕнче вĕсем çав районрах вырăнти стариксемпе пĕчĕк ачасене 120 çынна пухнă та наступлени туса килекен Хĕрлĕ Çар чаçĕсене хирĕç çапăçнă вăхăтра вĕсене мала кăларса янă. Пирĕн войскăсем Калинин хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнă чухне Германин 162-мĕш дивизийĕнчи 303-мĕш полкăн чаçĕсем, пирĕн войскăсене хирĕç контратакăсем тума хăтланса, хула тулашĕнчи пĕр ялтан мĕнпур хĕрарăмсене пухса килнĕ те, вĕсене хăйсем умне тăратса çапăçăва кĕрсе кайнă. Телее пула кăна çав хĕрарăмсем вилĕмрен хăтăлса юлнă: пирĕн чаçсем, нимĕçсен атакине сирсе ярса, çав хĕрарăмсемпе гитлеровецсем хушшине савăлланса кĕнĕ те, хĕрарăмсене вилĕмрен çăлса хăварнă.

Пирĕн территори çине хирĕнсе кĕнĕ нимĕçсен фашистла çарĕн хаярлăхĕпе юншăн антăхнин вĕçĕ-хĕрри те çук. Гитлерла çар ахаль вăрçă вăрçмасть, вăл вăрă-хурахла вăрçă вăрçать. Ку вăрçăра вĕсем хăйсем умне çакăн пек тĕллев лартнă: нимĕç фашисчĕсем ытти халăхсем хушшинче тата пĕтĕм тĕнчере пуçпулса тăма хапсăнаççĕ, вĕсем хăйсен юнлă çулне пӳлсе тăракан, мирлĕ пурнăça юратакан мĕнпур халăхсене пĕтерсе тăкма шутлаççĕ.

Гитлерла Германин правительстви, Совет Союзĕ çине ултавлăн килсе тапăннăскер, вăрçăра пĕтĕм тĕнчери правăсен нимĕнле нормисене те пăхăнмасть, этем моралĕн нимĕнле правилисене те пăхăнмасть. Вăл нимĕнрен малтан мирлĕ пурăнăçпа пурăнакан хĕçпăшалсăр халăха хирĕç, хĕрарăмсене, пĕчĕк ачасене, стариксене хирĕç çапăçать, çапла тунипе хăйĕн вăрă-хурахла сăн-питне тата ытларах палăртса пырать. Çак вăрă-хурахла правительствăна, вăйпала усă курса пусмăрлама тата çаратма кăна пĕлекенскере, ирĕклĕхе юратакан халăхсен хăйсен пĕтĕм хăватлă вăйĕсене пухса тĕпĕ-йĕрĕ юлмиччен çапса аркатмалла. Çав халăхсем хушшинче совет халăхĕсем хăйсен ирĕке тухас пысăкран та пысăк задачине вĕçне çитиех пурнăça кĕртĕç.

Хĕрлĕ Çар çеç мар, пирĕн нумай миллионлă мĕнпур халăх, хаяр çилĕпе çĕкленсе, совет çыннисен юнĕшĕн, вĕсен пурнăçĕсемшĕн тăшмана пĕр каçарусăр тавăрас тесе çунса тăрать. Нимĕç захватчикĕсен урса кайнă бандисем тунă тискерлĕхпе пусмăра, хуласемпе ялсене аркатса пĕтернине, мăшкăл туса кӳрентернине совет çыннисем нихăçан та манас çук, уншăн вĕсене нихăçан та каçарас çук.

ССР Союзĕ дипломатиллĕ çыхăнусем тытакан мĕнпур çĕршывсене нимĕç захватчикĕсем тăвакан çавăн пек тискер кайăкла ĕçсем çинчен каласа парса, Совет Правительстви çапла пĕлтерет: нимĕç войскисен çавнашкал этемле мар, вăрă-хурахла ĕçĕсемшĕн пĕтĕмĕшпех Германин гитлерла правительстви ответлă пулса тăрать. ССР Союзĕн Правительстви, çакăнпа пĕрлех, пĕр иккĕленмесĕр шантарса çапла калать: Совет Союзĕ ирĕклĕхшĕн вăрçни вăл Совет Союзĕн халăхсен прависемпе ирĕклĕхĕшĕн вăрçни кăна мар, çав вăхăтрах вăл тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсен прависемпе ирĕклĕхĕшĕн те вăрçни пулать, çак вăрçă вăл гитлерла войскăсене пĕтĕмпех çапса çĕмĕрнипе тата гитлерла тиранине пуçĕпех тĕп туса эпир çĕнтернипе вĕçленет.

ЙЫШĂНĂР Т. ЫТ. ТЕ.

В. МОЛОТОВ».

Мускав, 1942 çулти январĕн 6-мĕш.

Çĕнĕ çул парнисем ярса панă обществăллă организацисемпе уйрăм çынсем патне Хĕвеланăç фронтĕнчи Çар Совечĕпе Политуправлени янă çыру

Эсир пирĕн пата çĕнĕ çул ячĕпе сывлăх сунса янă çырусемпе парнесемшĕн Хĕвеланăç фронтĕнчи боецсемпе командирсем тата политработниксем Сире хĕрӳллĕн, пĕтĕм чĕререн тухакан сăмахсемпе тав тăваççĕ. Эсир сывлăх сунса янă çырусемпе парнесене илсен, эпир пирĕн пĕтĕм аслă халăх хăйĕн мухтавлă та паттăр Хĕрлĕ Çарне тăванла юратса хисепленине туйрăмăр. Эсир çĕнĕ çул ячĕпе янă саламлă ăшă сăмахсем пире çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантараççĕ, çав сăмахсем ĕнтĕ фашистла тискер кайăксене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкма чĕнеççĕ, тăшмана хирĕç вăйлăн та хаяррăн çапăçса аркатса тăкма чĕнеççĕ. Хаклă юлташсем, сирĕн шанчăка пурнăça кĕртĕпĕр тесе, эпир Сире шантарса калатпăр. Хамăрăн Хĕрлĕ воин парăмне эпир пурнăça кĕртĕпĕр. Оккупантсене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкăпăр. Сире те ĕç фронтĕнче пысăк çĕнтерӳсем тума ырлăх сунатпăр. Фронтпа тыл туслă пулса ĕçленипе çеç эпир Гитлерăн вăрă-хурахла шайккине пĕтерсе тăкăпăр. Татăклă çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать, мĕншĕн тесен пирĕн вăйсем вĕçĕ-хĕррисĕр нумай. Эпир тĕрĕс ĕçе хӳтлетпĕр, пире никам çĕнтерейми Ленин ялавĕ хавхалантарса пырать, Сталин юлташ пире çĕнтерӳ тума малалла илсе пырать.

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНТĔНЧИ ÇАР СОВЕЧĔПЕ ПОЛИТУПРАВЛЕНИ

Англи писателĕсем фашистсен Ясная Полянăри тискер ĕçĕсем пирки кӳренеççĕ

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсем Ясная Полянăра вандалсем пек тискеррĕн çĕмĕрсе пĕтернĕ пирки Англи писательници Джемсон пирĕн ТАСС корреспонденчĕ патне çыру çырса янă. Çав çырура çапла каланă: «Германи çарĕ Толстой кил-çуртне мĕнпур хаклă пурлăхĕсемпе пĕрлех çĕмĕрсе тăкнă пирки эпĕ хам епле хытă кулянни çинчен совет писателĕсене каласа пĕлтерме те пултараймастăп,— çав пурлăхсем вĕсем вырăс халăхĕн тата пĕтĕм тĕнче пурлăхĕ вырăнне шутланса тăратчĕç. Çав ирсĕр ĕçе тăвакансем—хăйсем мĕн тунине хăйсем те ăнланма пултарайман ĕлĕкхи варварсем мар,—кунта çакă ĕнтĕ чи киревсĕрри пулса тăрать. Ăна çĕмĕрекенсем пысăк культурăна тата асăлăран та аслă писателĕн памятникне çĕмĕрни çинчен хăйсем те лайăхах ăнланнă. Çакăн пек тискер ĕçе курнипе культурăллă тĕнчери кашни писатель хăйĕн кăмăлĕ кӳренсе тата тарăхса кайнине туять».

Çавăн пекех тата ТАСС корреспонденчĕ патне англичансен паллă поэчĕ драматургĕ О'Кереной çакăн пек çыру янă: «Толстойăн кивĕ çуртне пĕтерни— пирĕншĕн пуриншĕн те хурлăхлă ĕç пулса тăрать,—совет халăхĕшĕн ку татах та хурлăхларах, нимĕçсемшĕн вара пушшех те хурлăхларах. Аслă этем пурăнса шухăшласа ирттернĕ çĕрте нимĕне шеллемесĕр тискер ĕçсем туни вăл—нихăçан та каçарми çылăх туни пулать. Анчах та ку тискер ĕçсене вĕсем ăссăр пуçпа мар, уççăн пĕлсех, ăнлансах тунă.

Аслă вырăс çынни—пĕтĕм çынсен тăванĕ! Санăн пăсса тăкнă сад-пахчусемпе çунтарса янă çурт-йĕрӳсем урлă аллăмăрсене тăсса саламлатпăр эпир сана,—çакăнпа совет халăхне хамăр чĕререн кăмăлланине кăтартатпăр. Çынсене пĕтерме, çунтарма, вĕлерме пырса кĕнĕ çав тискер этемсене Хĕрлĕ Çар мĕнле те пулин хăвăртрах хăй çĕршывĕнчен хăваласа кăлартăрччĕ. Çав тискер этемсем нихçан та хăйсем вĕлерекен çынсемпе пĕртан пулайрас çук, çавăн пекех вĕсем хăйсем пĕтерекен япаласене тĕкĕнме те тивĕçлĕ мар».

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23. «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 280. Ф. 6. 58 84 п. л.

НТ 816